ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

3 (4469) №, 2016, январь / кăрлач / , 28
(1931 çулхи январĕн / кăрлачăн / 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ИНÇЕТРЕ

## Ача-пăча – ял илемĕ



**Хĕл пĕтĕм тавралăха шурă юрпа витсе хучĕ. Унччен анăçран вĕрекен çил сасартăках çурçĕр енне çаврăнса унтан сивĕ сывлăш хăваласа килчĕ. Майĕпенех çулсем урлă юр юххи, шурă çĕлен евĕр, авкаланса тăма тапратрĕ. Вăйлă тăмансем те пулчĕç тата анчахрах.**

Çĕрпӳ районĕнчи Паваркасси шкулĕн иккĕмĕш класĕн- че вĕренекен Аделина Дмитриева, Павел Павлов, Стас Филиппов та хĕллехи куна чунтан кăмăллаççĕ. Вĕсем урама яланах ăшă тумтирпе тухаççĕ. Вара пурте, хĕл чапĕпе илемне тĕрĕслесе пăхнă евĕр, урамра йĕлтĕрпе çĕнĕ йĕрсем хывма, хăш чухне çырмара çунашкапа селĕм тăвайкки якатма пикенеççĕ. Чăн та, уроксем хыççăн тавралăх ача-пăча шавĕпе янăраса тăрать. Çакнашкал ӳкерчĕк чылай çĕрте çук та пуль. Кунта вара чăннипех çапла: вĕтĕр-шакăр урама илем кӳрет.

– Ялта пурăнма пире питĕ килĕшет. Сывлăшĕ таса, тавралăх капăр... Каç пулать те, ир çитет. Кун сисĕнмесĕр шăвать. Аслисем ĕçе çӳреççĕ, эпир – шкула. Ăс пухса таврăнсан тус-юлташпа йĕлтĕр сырса уй-хиреваскатпăр. Эх, ярăнатпăр вара тăраниччен! Сăмсасем, пит çăмартисем хĕреличченех çӳретпĕр тулта, – хăпартланать Аделина Дмитриева пĕтĕм кăмăлтан.

– Аделина сăмахĕсемпе килĕшетĕп эпĕ! Маншăн та тăван кĕтес – чи хакли, чи юратни! Ӳссен ăста футболист пулас килет. Халĕ аслисем еплерех мечĕк хыççăн чупнине ăмсанса пăхатăп. «Манăн та вĕсенчен тĕслĕх илмеллех», – тетĕп вара хăпартланса. Шухăшăмпа вара вĕсемпе стадионта тарла-тарла чупатăп, хапхана мечĕк хыççăн мечĕк тапса кĕртетĕп, – йăл кулать спорта юратакан Паша.

Стас Филиппов та пĕрле вĕренекенсенчен юлас тĕллевлĕ мар. Пашăн сăмахĕсем çумне хăй шухăшне хушса та хучĕ.

– Эх, кăшт пысăкланам-ха, кавăн пек сарă мечĕке алла илсе баскетболла выльăп. Хирĕç килекен баскетболистсене ултавлă хусканусем туса вĕсен ункине мечĕк хыççăн мечĕк ывăтса кĕртĕп. Ăна кĕртмессеренех пурте хĕпĕртесе алă çупĕç. Татах та мулкач евĕр çăмăллăн сиккелĕп, хирĕç тăракансене вăрвар улталама та çаврăнăçулăх çитерĕп. Кирек хăш командăна та çĕнтерме ăнтăлатпăрах. Пире вара, çĕнтерӳçĕсене, ушкăнпа ярса илсе çӳлелле ывăтма тытăнаççĕ. Эх, çав куна чăтăмсăррăн кĕтетĕп эпĕ. Унччен вара йĕлтĕрпех ярăнăпăр, – йăл кулса калаçрĕ хастар Стас та.

*Элиза ВАЛАНС.*

Çĕрпӳ районĕ,
Паваркасси шкулĕ.

***ТУССЕМ!***
***Нарăсăн 1–мĕшĕнчен 2016 çулăн иккĕмĕш çур çулĕ валли çырăнтару пуçланать.***
***Пахча ĕçĕсене тытăниччен «Хыпар» Издательство çурчĕн пĕтĕм кăларăмне çак уйăхра çеç йӳнĕ хакпа çырăнса илме пулать.***
***Васкăр!***

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

# Хусанкая халалласа – уйăхлăх



Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕнче Чăваш халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай çуралнăранпа 109 çул çитрĕ. Çавăнпах ĕнтĕ Шупашкарти 12-мĕш шкулта тĕнчипе паллă поэтăмăра сума суса кăрлач уйăхне Хусанкая халалларĕç. Уроксенче, урок тулашĕнчи ĕçсенче унăн биографине, пултарулăхне тишкертĕмĕр, тĕрлĕ конкурс ирттертĕмĕр. Ачасем мероприятисем килĕшнине, пĕри тепринчен кăсăклăрах иртнине палăртрĕç. Çапах та П.Хусанкай вилтăприйĕ çинче пулнă самантсем 6 «а» класра вĕренекенсен асĕнче ытларах юлчĕç. Унта вĕсем Хусанкай сывăх тăванĕсемпе, унăн пултарулăхне хисеплекенсемпе тĕл пулса калаçрĕç, поэт сăввисене вуларĕç. Юлашкинчен пурте пĕрле асăнмалăх сăн ӳкерĕнчĕç.

*Анисия ИГНАТЬЕВА,*
*ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.*

# Пĕтĕм тĕнчери ыталашу кунĕ



Ыталашу – ют пулăм мар. Йывăр вăхăтра пире çывăх çынсем ытамне илсен пурнăç та çăмăлланнăн, тĕксĕм куна çутатса хĕвел пăхнăн туйăнать. Кăрлачăн 21-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчере тĕлĕнтермĕш уява – Ыталашу кунне – паллă тăваççĕ. Вăл 1986 çулта Америкăн Пĕрлешӳллĕ Штачĕсенче тымар илнĕ, унтан пĕтĕм тĕнчене сарăлнă. Уяв йăли-йĕркине ĕненес пулсан, çак кун палламан çынна та ыталама юрать. Халап тăрăх, юлташла ыталанă вăхăтра çынсем пĕр-пĕринпе чун ăшшине пайлаççĕ иккен.

Психологсен шухăшĕпе, сире кам та пулин хăйĕн ытамне илет пулсан вăл хăрушсăрлăха, хăтлăха тата юратăва туясшăн имĕш. Çак пулăм пурнăç тăршшĕпех пирĕнтен хăпмасть. Эпир çывăх çынсене, юлташсене тĕл пулсан, нумай вăхăт курмасан ыталатпăр, çапла майпа хамăрăн савăнăça тата пархатарлă кăмăла палăртатпăр. Тепĕр тесен, ку уяв пирĕншĕн тăкаклă та мар, саламлас тесен çывăх та юратнă çынсене чун ăшшипе ыталамалла çеç.

**Алина СТЕПАНОВА, 11 класс** /Пушкăртстан, Пишпӳлек районĕ, К.В.Иванов ячĕллĕ Пăслăк шкулĕ/: "Эпĕ юлташсене ыталама питĕ юрататăп. Унсăр мĕнле-ха? Тĕл пулсан кашнинчех ыталанатпăр. Аннене мĕнле юратнине те çапла кăтартса паратăп. Ачасене те, аслисене те çакă питĕ кирлĕ. Хăш чухне çывăх çын ытамне лексе мĕн кулянтарнине йăлтах манас килет".

**Виктория АЛЕКСАНДРОВА, 10 класс** /Канаш районĕ, Уçырма шкулĕ/: "Çывăх çынсемпе юлташсене эпĕ час-часах ыталатăп. Çакна валли мана нимĕнле сăлтав та кирлĕ мар. Е тепĕр чухне вĕсен ăшшине, юратăвне туяс тесе ытама лекес килет. Манăн шухăшпа, çынна ыталани кирлех. Ун чухне вăл хăйне пĕчченлĕхре туймĕ, кама та пулин кирлине ăнланĕ. Мана та ыталани питĕ кирлĕ, вăл телейлĕ пулма пулăшать".

*Лариса ПЕТРОВА.*

**Автор сăнӳкрчĕкĕ.**

## ЙĂЛТАХ ПĔР САСПАЛЛИРЕН

### Çеруш çырăвĕ

Çеруш çĕрĕпе çывăраймарĕ, çыру çырчĕ: «Çтаппан! Çуркунне çĕмĕрт çеçки çурăлсан çемье савăрасшăнччĕ – çавăраймарăм. Çĕнĕ çулта çĕнĕ çемье савăрмаллах, çапкаланса çӳресе çитет, çирĕм çичĕ çула çитрĕм çапах. Çветтуй çуртра çурта çутрăм, çирĕм çухрăмри çирĕм çулти Çинахвие çураçасшăн. Çăвĕпех çум çумлатăп, çимĕçсем çитĕнтеретĕп. Çемьесĕр – çунатсăр.

Çинахви – çĕвĕç. Çĕнĕ çула çĕнĕ çи-пуç çĕлеттерĕп. Çĕнĕ çынна çавăрмаллах…

Çитĕ çырса. Çывăрас. Çыру çыр.

Çыраканĕ Çеруш».

### Кăмпара

Кĕркунне кăнтăрла Коля куккапа кăмпана кайрăмăр. Каçмапа каççан кĕтӳ курăнчĕ. Кĕркури кĕтӳçĕ кунта куллен кĕтӳ кĕтет. Катари клевер кавиртен кая курăнмасть. Качакасем курăк кăшлаççĕ, кăмăлтан кавлеççĕ. Кунтах кӳлĕ. Кас-кас кайăксем кĕвĕ кăлараççĕ…

Кăрăçсем карта-картан курăнаççĕ. Купипех кунта! Куккапа калаçа-калаçа кăмпа касрăмăр. Кассан-кассан кантăмăр, кутамккаран кулачă, кăлпасси, канфет, кăлартăмăр. Кукамай кучченеçĕ кăмăла кайрĕ.

Кайсан-кайсан куяна курах кайрăмăр.

– Кай кунтан! – кăшкăрчĕ кукка.

Касса кайса култăмăр куянтан.

– Киле каяс килмест! Каллех кăмпасем курăнаççĕ, – калаçать кукка.

Кун каçипе каснă кăмпасем кутамккапа карçинккана кĕмерĕç.

Каçхине кăмăллăн киле кайрăмăр. Киле килсен кăрăçсене кӳршĕсене, кукаçипе кукамая кăтартрăмăр, куяна курнине каларăмăр.

Кĕçнерни кун каллех кăмпана кайăпăр!

### Якур ятлавĕ

– Янăна яла ямастăп. Ялта япăх. Яхтăпа ярăнма Ялтăна яратăп, – яхăнне ямасть Якур.

– Якур, ята яратăн. Ялсенче япшар яшсем. Яр Янăна яла, ялхуçалăхне явăçтар, – ятлаçать Януш.

### Петровсен пурнăçĕ

Пĕчĕк пӳртрех пиллĕкĕн пурăнатпăр. Пукрав праçникĕнче пĕртăвансем пĕрле пухăнса пĕренерен пысăк пӳрт пуçтарма палăртрăмăр.

Пӳртĕн пĕр пӳлĕмĕнче Павăл пичче пурăнать, пукане пек Пăлакипе пĕрлешесшĕн. Пиччен Питĕрте пысăк пӳлĕм пур, пушăскер.

– Пĕрлешсен Питĕрте пурăнăпăр, пĕрле пулăпăр, – пĕлтерчĕ Павăл.

Петĕр пичче – пуçлăх. Пĕчченех пурăнать. Пăрчăкан пек Патăрьел пикисем Петĕрпе пĕрле пуласшăн. Петĕре политика пулăмĕсем питĕ пăшăрхантараççĕ.

– Пирĕн пĕлтерĕшлĕ программăна пурнăçлама пуçламалла, – пĕлтерчĕ пуçлăх пĕрремĕш пухурах.

Пурис пичче – паллă предприниматель, поселокри пуянсенчен пĕри. Паянхи пурнăçра пуçаруллисем – предпринимательсем. Пухусенче пĕр-пĕрин продукци пахалăхĕпе паллашаççĕ. Паллах, предпринимательсене патшалăх пулăшу пани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пурис пĕрле пурăнмасть пулинех пире пулăшать.

Полинăн пĕтĕм предметпа «пиллĕк» паллăсем. Педагогсем паян питĕ паха пĕлӳ параççĕ.

Пирĕн пахча пысăк. Пăрăçсене, помидорсене, патиссонсене Полина пăхать, пурте пулăшатпăр, пиçсен пĕрле пуçтаратпăр.

*Таня БАРСКАЯ.*

Елчĕк районĕ,
Аслă Таяпа.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 – (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1595 экз.

● ЗАКАЗ
№ 243
Пичете кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш 3
3 №, 2016, кăрлач, 28

# Йывăр пулсан та... чуна хытаратăп

Улăхра çӳрет Саша. Сарă, хĕрлĕ, кăвак лĕпĕшсене кăмăлтан пăхса тути йăл кулать. Шăп çак вăхăтра пĕр усă та янăравлă сасă илтĕнчĕ.

– Сашенька, йăмăкăм! – тесе кăшкăрчĕ савăнтах.

Хĕрача хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Çӳллĕ çамрăк калаçать-мĕн. Тинкеререх пăхрĕ те – пиччĕшĕ Игорь иккен. Саша савăнăçлăн ун ытамне чăмрĕ.

– Йăмăкăм, атя-ха сана юрă итлеттеретĕп. Юрă-кĕвĕ вăл мĕн тери вăйлă та хăватлă. Ăна нимпе те танлаштараймăн. Ăна итленĕ май шухăшпа таçта-таçта çитетĕн. Хăвна ытла та селĕм туятăн. Кăмăл çĕкленет, ĕмĕт çунатланать, чун савăнать. Юрлас, ташлас килет. Çук, юрă çынна кăна мар, чĕрчуна та, ӳсен-тăрана та хăват парать. Ĕненсем, – терĕ Игорь çаплипех кăмăллăн.

Ыйхăран шарт сиксе вăранчĕ Саша. Унталла-кунталла пăхкаларĕ, пиччĕшне шырарĕ. Анчах никама та курмарĕ. Унтан ку пулăм тĕлĕкре çеç пулнине ăнланса илсен... куçĕ куççульпе тулчĕ.

– Пиччем, юратнă пиччем... Унччен те юрă-кĕвĕ юрататтăн та, лере те çаплах иккен. Эх, сансăр мĕн тери йывăр-çке. Пурнĕ те: атте-анне, кукамайпа кукаçине, тăвансене тата мана мĕн тери хуçса-амантса хăвартăн. Эсĕ пирĕн пурнăç тĕрекĕччĕ... Кукаçипе кукамайăн хĕрсем çеç пулнăран, эсĕ çуралсан мĕн тери хĕпĕртенине пĕрре мар каласа паратчĕç. «Ывăл вăл ывăлах. Алла мăлатукпа пуртă тытакан та кирлĕ хуçалăхра. Ахальтен мар арçынна ĕлĕкех ылтăн юпапа танлаштарнă», – тетчĕç сана юратса. Шел, 18 çул тултараймасăрах пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрăн... Кукаçи куççуль кăларнине нихăçан та курманччĕ эпĕ. Эсĕ пирĕнтен кайсан... Унăн та куçĕ куççульпе тулчĕ. Пиччемçĕм, санăн сарлака çурăму хыçĕнче е юнашар мăнаçлăн утасси урăх ĕмĕрне те пулас çук... «Эсĕ, йăмăкăм, пĕчĕк-ха. Нумай япалана ăнланмастăн. Тĕнчере ай-яй йывăр. Пурнăç тени вăл вăйă мар. Анчах нихăçан та пуçа усмалла мар. Мĕншĕн тесен санăн пиччӳ пур.



Вăл сана кирек хăш вăхăтра та хӳтĕлеме хатĕр. Асра тыт: тăвансен пĕр-пĕрне пулăшмалла», – терĕн пĕррехинче йăл кулса. Каçар, эпĕ сана пулăшаймарăм... Нимĕнпе те... – ĕсĕклерĕ хĕрача пиччĕшне аса илнĕ май.

Саша Осипова Йĕпреç районĕнчи Хурамал шкулĕн 6-мĕш класĕнче пĕлӳ илет. Унччен хаваслă та хастар хĕрача пулнă вăл, иртнĕ çулла пиччĕшĕ çĕре кĕрсен тĕнче ишĕлсе аннăнах туйăннă ăна. Паян та лăпланаймасть вăл. Кашни кун, кашни сехетре Игоре аса илет. Аса илет те чунĕ пăчăртанса ыратать.

– Ăна аса илтерекенни килте тем чухлех. Пӳртре те, тулта та... Картишри лашана курсан та... каллех, каллех куç умне пурнăçа юратакан Игорь тухса тăрать. Янаварпа ытларах вăл ĕçлетчĕ-çке, – сăмахне малалла тăсать Саша куççульленсе.

Саша Осипова тĕрлĕ çулсенче Çĕрпӳре те, Шупашкарта та ăс пухнă. Паян вара вăл – Хурамалта. Ашшĕпе амăшĕ Мускава ĕçлеме çӳреççĕ, Сашăпа пĕрремĕш класра вĕренекен Женя вара кукашшĕпе кукамăшĕ патĕнче пурăнаççĕ.

– Юратнă çыннăмсене кирек хăш вăхăтра та пулăшма тăрăшатăп. Кукамай ĕçрен час таврăнаймасть те килти ĕçсене хам пурнăçлатăп. Ĕне сăватăп, пӳрт-çурта тасататăп. Ăна çăмăллăх кӳрес килет-çке-ха. Вăл çĕвĕ машини илчĕ те, халĕ ун умĕнчен таталма пĕлместĕп. Хам валли япаласем çĕлетĕп. Авă юбка хатĕр те манăн. Тата çĕнни мĕн те пулин шутласа кăларас килет. Шкултан вĕренсе тухсан, тен, çĕвĕç профессине алла илĕп-и-ха? Е тата, ирĕклĕ майпа кĕрешекен секцие çӳретĕп те, тренер пулас ĕмĕт те канăç памасть. Физкультура урокне те кăмăлпах çӳретĕп авă. Эх, спорта юратма та мана пиччем вĕрентрĕ те çав... – çаплипех ассăн сывлать хĕрача.

Хурамал... Килĕшет ăна çак ял. Уйрăмах инçех мар вырнаçнă хурăнлăхĕ, вăрманĕ, пĕви, юханшывĕ чунне уçса ярать.

– Хуларипе танлаштарсан кунта кăмăла çĕклентерекенни тем чухлех. Уçă та таса сывлăш мĕне тăрать! Юнашарах, авă, ăс парса вĕрентсе пыракансем – кукаçипе кукамай. Вĕсене эпĕ питĕ-питĕ юрататăп. Канмалли кунсенче кукамайпа тĕпел кукринче кăштăртататпăр, кукăль-пӳремеч пĕçеретпĕр. Ĕç вĕçленсен пурте сĕтел хушшине вырнаçатпăр. Шăкăл-шăкăл вакланать сăмах апат çинĕ май. Игоре те аса илетпĕр... Анчах ялан макăрма юраманнине те пĕлетĕп. Унсăрăн ăна та япăх пуласси чунпа туятăп. Темле йывăр пулсан та чуна хытаратăп, шăла çыртатăп... Пиччем малашне пире пурнăçра пулăшса çеç тăтăрччĕ, – терĕ Саша.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Йĕпреç районĕ,
Хурамал.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

**МАТТУРСЕМ**

# Анлă тавракурăмлă Святослав



Тăваттăмĕш «б» класра вĕренекен Святослав Сергеев анлă тавракурăмлă та çивĕч ăслă арçын ача. Çакă уйрăмах тавралăх урокĕнче уççăн палăрнине Любовь Николаевна Маркова вĕрентекен пĕлтерчĕ.

– Яланах хăйне евĕрлĕ хуравсемпе савăнтарать мана, – тет вăл кăмăллăн.

Святослав ку темăпа ачаранах кăсăкланма пуçланă иккен. Саспаллисене паллама пуçласанах тавралăх, тĕнче пирки çырнă кĕнекесене хаваспах тишкернĕ. Çак темăна уçăмлатакан журналсене те кăмăллать. Йăлтах кăсăклă пĕчĕккершĕн. Яланах нумай пĕлме ăнтăлнăранах пушă вăхăтра та аллине кĕнеке тытать. Килте ларса йăлăхсан вара юлташĕсемпе урама выляма тухать. Унтан хавасларахха мĕн пултăр-ха? Пĕрле пухăнса тĕрлĕ вăййă вылясси кăмăла çĕклет-çке.

Сăпайлă та ырă кăмăллă арçын ачан юлташ чылай. Чи çывăххисем вара Миша тата Илья. Святослав тантăшĕсем çинчен хăпартланса калаçрĕ.

– Мишăпа Ильяна çивĕч ăс-тăнĕшĕн, вăй-халлă та ырă кăмăллă пулнишĕн питĕ хаклатăп та хисеплетĕп. Кунсерен шкула пĕрле килетпĕр-каятпăр, «Улăп» физкультурăпа спорт комплексне ишев секцине çӳретпĕр, – мăнаçланать тусĕсемпе маттурскер.

Вĕренӳре пĕр-пĕрне пулăшса пыни те самай çывăхлатать ĕнтĕ арçын ачасене. Чи кирли вара туслăха малашне упраса хăварасси, çирĕплетесси.

# Çамрăк музыкçă Таня

Таня Ткаченкопа паллашсан тӳрех ыттисенчен урăхларах хушамачĕ кăсăклантарчĕ. Хĕрачан ашшĕ Казахстанра пурăннă иккен малтан, çавăнтан Чăваш Ене çитнĕ-мĕн çак хушамат.

Таня пĕчĕкренпех юрă-кĕвĕ тĕнчине иленнĕ. Иккĕмĕш класра чухне Елчĕкри искусствăсен шкулне çӳреме пуçласан туйса илнĕ вăл çакна. Унта хаваспах çул такăрлатать. Малтанах домра калама вĕреннĕ, халĕ пианинопа кăсăкланать. Унсăр пуçне сольфеджио тата итлев урокĕсем иртеççĕ.

Канмалли кунсемсĕр пуçне кашни кун уроксем хыççăн чупать вăл хăйĕн юратнă иккĕмĕш шкулне. Ăсталăхне ӳстерни ăна калама çук хавхалантарать. Талантлăскер районти пултарулăх конкурсĕсене тăтăшах хутшăнса малти вырăнсене çĕнсе илет.

– Музыка шкулне çӳрени малашнехи пурнăçра та кирлĕ пулĕ-ха. Сăмахран, эпĕ юрăçă пулма шут тытсан… – кăмăллăн йăл кулать Таня.

Юрă-кĕвĕпе çывăхрах туслашни ăстăншăн та усăллă иккен.

– Пире домра калама вĕрентекен Зинаида Петровна Павлова: «Нотăсене пĕлни математикăра та пулăшать», – терĕ. Ку чăнах та çапла, – ăнлантарать çамрăк музыкçă.



Çемçе чунлăскер чĕрчунсене, уйрăмах кушаксене питĕ юратать. Килĕнчи Маркизăпа тата Серыйпа тăтăшах выляса киленет. Мĕн чухлĕ хаваслăх парнелеççĕ вĕсем пĕчĕк хуçине!

Таня спортпа та туслă. Киле парса янă ĕçсене вĕçленĕ хыççăн хĕлле юлташĕсемпе йĕлтĕрпе, конькипе ярăнма çӳрет. Çуран чупма та вăхăт тупать.

Маттурскер «Тантăш» тусĕсене те ăслă, çирĕп сывлăхлă пулма, тăрăшма ырă сунать.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Елчĕк районĕ,
Елчĕкри пуçламăш шкул.

***Иртнĕ çул Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи чарăннăранпа 70 çул çитрĕ. Ăна халалласа вăрçă ветеранĕсем çинчен чылай материал хатĕрлерĕмĕр. Фронтран янă салтак çырăвĕсем те кун çути курчĕç хаçатра. Кунсăр пуçне Ленинград блокадинче хур тÿснĕ ачасен асаилĕвĕсем те вырăн тупрĕç «Тантăшра». Вулакан «Вăрçă ахрăмĕ» рубрикăна чунтан килĕшнине пĕлтерчĕ, паян та вĕсем ыйтнипех шкул ачи асаилĕвне пичетлетпĕр. Çитменнине ĕнер Ленинград хулине фашист пусмăрĕнчен хăтарнăранпа 72 çул çитрĕ.***

# Вĕçĕмсĕр чуптурăм... Кĕççеленнĕ çÿçĕнчен, шыçăннă аллисенчен...

*Альберт Николаевич Шестаков асаилĕвĕ*



«Вăрçăччен эпир Ленинград облаçĕнчи Гатчина хулинче пурăнаттăмăр. 1940 çулта аттене, çар çыннине, Кишинев хулине куçарчĕç.

1941 çулхине май уйăхĕнче эпĕ иккĕмĕш класс вĕренсе пĕтертĕм. «Ачам, куç умĕнчех пысăкланатăн. Вĕренÿре кăна мар, спортра та маттуррисенчен пĕри пулнăран чăнласах та савăнтаратăн. Куншăн авă ылтăрах аçу хĕнĕртет. Ара, вăл сана та хăй пекех çар çынни тăвасшăн-çке», – терĕ анне ăшă аллисемпе пуçран ачашланă май.

Пĕр кунхине вара эпир атте патне хăнана кайрăмăр. Пирĕншĕн тунсăхланăскер çав тери савăнчĕ вăл. Хамăр тата! Йăмăкпа иккĕн ун чĕрçи çинчен анма пĕлместпĕр вĕт!

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ. Каç. Пурте тарăн ыйха путнăскерсем тĕрлĕ шăв-шава пула вăрантăмăр. Таçта инçех мар бомба ÿксе çурăлнине те илтрĕмĕр. Атте ĕнтĕ виççĕмĕш кун килте мар, ялан хăй ĕçĕсемпе çÿрет. Вăл пулнă-тăк таврара мĕн пулнине ăнлантарса парĕччĕ-ха. Йăлтах пĕлес килнĕрен урама тухрăм. Картиш алăкĕ патне çитсен палламан çынсем тытса чарчĕç.

– Пурăнас килсен – ниçта та ан тух! – терĕç каялла хваттерелле хăваланă май.

Анчах вĕсем сисиччен хапха айĕнчен йăраланса тухрăм та атте патне штаба çил пек вĕçтертĕм. Ара, пĕррехинче кайса курнăччĕ-çке ун патне. Çулне те питĕ лайăх пĕлетĕп. Мана курсан аттен сасартăках куçĕсем чарăлчĕç.

– Ачам, мĕн хăтланатăн эсĕ! Вăрçă пуçланнă вĕт-ха, хăвăртрах каялла аннÿ патне васка. Кĕçех унта машина килмелле. Çар çыннисен çемйисене эвакуацилеççĕ. Чуп часрах, васка! Машина сансăр çеç ан кайтăр, – тесе мана пÿлĕмрен тĕртсех кăларса ячĕ.

– Атте, атте! Мĕн вăл вăрçă? Сăмахне ăнланмастăп. Вăрçă пуçланни лайăх-и вара вăл е начар? – терĕм каялла чупса кĕрсе.

– Ачам, вăл хăрушă япала. Кун пирки кайран каласа кăтартăп, – тесе каллех вăйпах хăваларĕ.

...Тавар турттаракан поезд умĕнче лăк тулли халăх. Пĕчĕккисем макăраççĕ, аслисем татăлса йĕреççĕ. Авă, пирĕн анне те вĕçĕмсĕр куçне шăлать, йăмăка хăй çумне чăмăртанăскер хăрах аллипе мана çупăрланă.

– Асту, ман çумран ниçта та ан кай, çухалса юлăпăр пĕр-пĕринчен, – тет ассăн сывланă май.

Вакун алăкĕсене уçрĕç. Пурте унталла кĕпĕрленчĕç. Малтан ачасене лартрĕç, кайран аслисене. Халăх нумай пулнăран анне вакуна лекеймерĕ. Поезд тапрансан вăл кăшкăрса ячĕ:

– Ачамсем, тĕпренчĕкĕмсем! – тесе поезд хыççăн татăлса йĕрсе чупрĕ.

Шĕкĕр Турра! Вăл вакун çине хăпарса ларма пултарчех. Эпир йăмăкпа тÿрех ун патне чупса пытăмăр, ĕсĕклесе ытамне чăмрăмăр. Хамăр сиксе чĕтретпĕр.

Пĕр эрне çул çинче пулнă хыççăн Ижевска çитрĕмĕр. Темиçе кунран документсене илсе тăван тăрăха каялла çул тытрăмăр. Гатчинăна çитиччен пирĕн поезда нимĕçсем бомба пăрахрĕç. Çăри-çари çухăрса пурте вакунран тарса пĕтрĕмĕр.

– Кунта аçун йăмăкĕ пурăнать, атьăр-ха çавăнта çĕр каçар, – тесе пире анне хĕрлĕ çурт умне илсе çитерчĕ.

Алăк çинче пысăк çăра çакăнса тăнине курсан тĕлĕнсех кайрĕ вăл. Шăп çав вăхăтра палламан хĕрарăм пырса тăчĕ. Эпир Надя аппа патне килнине ăнланса илчĕ вăл.

– Эх, пурнăç...

Тата мĕн кăтартĕши ку вăрçă? Надьăна та авă, шофера вĕреннĕскере, анчахрах вăрçа илсе кайрĕç. Килне каялла хăçан çаврăнса çитессине пĕр Турă анчах пĕлет пуль ĕнтĕ, – терĕ вăл пирĕн çине шеллесе пăхса.

## Анне, хăçан пăтă пĕçерсе çитеретĕн?

Утрăмăр çурран тăван килелле. Хырăм выçнăран вăй та пĕтсе килчĕ. Утнă чух сулăнса та каятăп.

– Анне, хăçан эсĕ пире сĕтпе пăтă пĕçерсе çитеретĕн? Çакнашкал нушана ку тараннччен курманччĕха, – нăйкăшрăм ниçта кайса кĕреймесĕр.

– Ачам, малашне тата нумайрах курăпăр-ха нушине, – терĕ анне ÿсĕркеленĕ май.

Июль вĕçĕнче пире хуларан эвакуацилерĕç. Поезда лартăмăр. Ăçта илсе каяççĕ? Никам та нимĕн те пĕлмест. Кĕçех поезда пеме те тытăнчĕç. Каллех çуйхашу, макрашу пуçланчĕ. Эпир те тухса тартăмăр вакунран. Самантрах тĕмĕсем хушшине пытантăмăр. Акă пĕр самолет пирĕн тĕлелле аялтанах вĕçрĕ. Кабинăран нимĕç салтакĕ пирĕн çинелле пăхнине курсан чун сÿ! турĕ. Юрать асăрхаса ĕлкĕреймерĕ. «Çак хăрушă ÿкерчĕке эпĕ нихăçан та манас çук», – шухăшларăм лăпланаймасăр.

Вакуна каялла таврăнтăмăр. Пĕр пассажир Вася пичче тупăнмарĕ. Вăл уксах пулнăран туяпаччĕ. Таçта нимĕç пульли вĕлерчĕ ахăртнех. Вăхăт иртсен каллех Ленинграда таврăнтăмăр. Тăван тăрăхран хакли çукçке-ха... Пире эвакуаци пунктне вырнаçтарчĕç.

Анне госпитальте санитаркăра ĕçлеме тытăнчĕ. Йăмăка садике вырнаçтарчĕ. Анчах пĕррехинче начарккан аннем ĕçрех тăнне çухатса урайне тĕшĕрĕлсе аннă. Ку инкек хыççăн урăх каяймарĕ госпитале. «Вăй çук. Пĕр чĕптĕм те. Ах, мĕнле пурăнмалла?» – терĕ пăшăлтатса. Инкек çине синкек тенешкел, йăмăк садикре урисене шăнтса тăм илтернĕ.

Эх, пурнăç... Çимелли ним те çук. Кашни кун кастрюле шыв яратпăр та унта типĕ сулçă чăмтаратпăр. «Буржуйка» кăмака çине вĕретме лартатпăр. Вăрçăччен кăмака çинче темиçе хут çĕрулми пĕçерсе çинĕччĕ, халĕ вара вут хутмассерен пÿрте çĕрулми шăрши тапса тухать. Антăхса каясла шăршлатпăр ăна.

– Ман çĕрулми çиес киле-е-е-ет! – йĕрмĕшет йăмăк кашни кунах кăмака тавралла çаврăнса.

Анне мана çăкăр карточкине шанса памасть. Çухатсран хăрать. Вăйсăр пулин те, хăех тухса утать лавккана. Унтан час таврăнаймасть вăл. Черет вăрăм пулнине ĕнтĕ хам та чухлатăп халĕ.

## Вилесене мăччана çитиччченех купаланă

Эвакуаци пункчĕ икĕ хутлăскер. Эпир пĕрремĕшĕнче тĕпленнĕ, иккĕмĕшĕнче те халăх лăк туллиех. Унта вара пĕр пÿлĕмре вилнĕ çынсене хумалли вырăн йĕркеленĕ. Пĕрре алăка уçса ятăм та... куç-пуç чарăлса кайрĕ. Мĕн чухлĕ виле! Вĕсене мăччана çитиех купаласа хунă. Пĕррехинче салтаксем вилесене машинăна тиенине те куртăм. Хăрушă! Пĕр каçхине тĕттĕм коридора шыв ĕçме тухрăм, темрен такăнса таçта çитиех вĕçсе кайрăм. Мĕнрен такăнтăм-ши тесе алăпа хыпашларăм та... çÿç-пуç вирелле тăчĕ. Алла сивĕ, шăнса пăрланнă çăра ÿт çакланчĕ. Хăранипе çари! кăшкăрса ятăм. Тĕрĕссипе, вилĕ çынсен тумтирне çавăнта пурăнакансемех хывса илеççĕ. Ара, ку вырăна пире çулла илсе килнĕ те, халĕ – хĕлле. Çÿхе тумтирпе мĕн тери сивĕ! Никамăн та хĕллехи япала çук, пурте сиксе чĕтретпĕр.

Пĕр кун анне хамăр пурăнакан хваттере çитсе килме шухăшларĕ. Çитнĕ унта, анчах усси пулман. Пирĕн çурта нимĕç бомби сирпĕтнĕ. Апла пулин ишĕлчĕк айĕнче вăл йăмăкăн япалисене тупса килме пултарчĕ.

Çĕнĕ çул умĕн пирĕн кантăкран такам хуллен шаккарĕ. Анне урама тухрĕ те пĕр хĕрарăмпа кĕчĕ. Хайхи палламан çын алăк урлă каçсанах урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ. Анне ун тавра чупкалама тытăнчĕ, кĕçех пÿлĕмре ача сасси янăрарĕ.

– Эх, нуша курма килтĕн ĕнтĕ çут тĕнчене, – терĕ анне пĕчĕкскере хăй тутăрĕпе чĕркенĕ май.

Палламан хĕрарăм кăштахран йывăррăн кăшкăрса ячĕ. Куçне те аран уçкаларĕ.

– Шыв, шы-ы-ыв, – терĕ вăйсăррăн.

Пирĕн пÿлĕмре шыв çук. Шыв ăсма кайманни те пĕр эрне çитет. Куллен кăмака çумĕнче юр ирĕлтеретпĕр. Ку хутĕнче те эпĕ ÿсĕр çын пек тайкаланса урама юр илме тухрăм. Ача амăшне пулăшмалла-çке.

...Эвакопункт. Унти пурнăç тĕлĕкри пек иртрĕ. Март уйăхĕччен нушаланса пурăнтăмăр çапла. Пĕр кунхине пире пĕчĕк те сивĕ атобуссене лартса Ладога кÿлли урлă илсе каçрĕç. Унтан урăх хуланалла çул тытрĕç. Палăртнă вырăна çитсен тÿрех больницăна вырнаçтарчĕç. Ачасене пĕр пÿлĕме, аслисене – юнашаррине. Йывăр чирлĕ йăмăка тÿрех операци турĕç.

Больницăра эпĕ йăл илтĕм темелле. Самайлантăм. Апат енчен те аванрах. Шĕвĕ яшка çитереççĕ. Тепĕр чух çăкăр та леккелет. Аслисене, çав шутра аннене те, вырăн çитмест тесе больницăран кăларчĕç. Тунсăх.

## Сĕт... сĕт ĕçес килет...

Икĕ эрне те иртрĕ. Пĕрре çапла коридорта ларатăп. Сасартăк анне утнине курах кайрăм. Савăнтăм. Хайхискер ман пата çитрĕ те:

– Ачам, Алик Шестаков хăш палатăра выртнине пĕлместĕн-ши? – терĕ хурлăхлăн.

– Анне, анне! Эсĕ мана палламастăн та-им? – терĕм сак çинчен сиксе тăрса.

Вăл ман çине шăтарасла пăхрĕ те куççуль витĕр ыталаса илчĕ.

– Пит çăмарти те кăшт тулнă санăн, кĕлеткÿ те хитреленнĕ. Ара, шăммупа тирÿ çеçчĕ-çке санăн больницăна выртиччен, – терĕ çаплипех мана ытамĕнчен вĕçертмесĕр.

Тепĕр икĕ кунтан йăмăкпа больницăран тухрăмăр, пирĕн çемьене хĕсĕк общежитие вырнаçтарчĕç. Аннепе иксĕмĕр самайлантăмăр-ха, йăмăкăм вара кунранкун йывăрланчĕ. Ун çине пăхсан чĕре çурăлса каять. Пирĕн умра чĕрĕ çын мар, кăшт кăна сывлакан виле тăрать. Сăнĕ-пичĕ, пĕтĕм ÿчĕ кăвак тăпра тĕслĕ, кĕлеткинче пĕр тумлам юн та юлман пек. Хулĕсем хăрăк йывăç тураттисем пек çакăнса тăраççĕ, пĕççисем те шăмă çеç. Анчах аллисемпе урисем тукмак пек шыçса ларнă. Пĕр кунхине пĕчĕкскер пушă консерв банки тытрĕ. Чарăлса кайнă куçĕсем ним тĕлсĕр пăхаççĕ, хăй йывăррăн сывлать.

– Сĕт, сĕт ĕçес килет... – аллинчи савăта аран çĕклесе пăшăлтатнă пек каларĕ вăл.

– Турăçăм, мĕн кăна кăтартмаççĕ фашист çынçиенĕсем пирĕн халăха! – ассăн сывласа ярса, пуçне ик енчен пăчăртаса лартрĕ анне. – Мĕншĕн асапланмалла ĕнтĕ çак хĕр пĕрчин!..

Пĕр кунхине вара, анне килте çук чухне, юратнă йăмăкăм алăрах вилсе кайрĕ. Кăшкăрса, ÿлесе макăртăм. Кăвакарнă тутинчен, шыçăннă аллисенчен, пĕчĕк сăмсинчен, кĕççеленсе хуралнă çÿçĕнчен чуптурăм та чуптурăм... Шел, тем чухлĕ чуптусан та... куçĕсене урăх уçаймарĕ пĕчĕкскер...

Тем те куртăмăр, тем те тÿсрĕмĕр... Нихăçан манма çук çав хăрушă самантсене. Вĕсем асра ĕмĕрлĕхех юлаççĕ. Пуртăпа касса паллă туса хăварнă пек. Тĕлĕкре те час-час курăнаççĕ. Вăхăт нумай иртнĕ пулин те хăшĕ-пĕрне паянхи кун та аса илме йывăр. Тата хăшĕсем çинчен çынна каласа парас пулсан та ĕненес çук. Ытла та ĕненмелле мар çав. Анчах пулнă ун пекки, пулнă!..»

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Тĕлĕнмелле ăста юмахçăччĕ вăл

**Пĕр самана вырăнне тепри килĕ, ăрупа ăру ылмашăнĕ. Анчах этемлĕх юмахсемпе кăсăкланма нихăçан та пăрахмĕ. Пĕрисем халапсем пулăшнипе пулăмсене ăнлантарса пама тăрăшĕç, чăнлăхран хӳтĕленĕç, вĕсемпе воспитани тĕллевĕсене пурнăçлас тесе усă курĕç; теприсем вара ниме пăхмасăр асамлăха ĕненĕç...**




## Кăнтăрла юмах юптармаççĕ

Пĕчĕк чухне юмах итлеме юратман ача çук-тăр. Эпир те, шăллăмпа иксĕмĕр, кукамай килти ĕçсенчен пушанасса, пире хăй пӳлĕмне чĕнессе чăтăмсăррăн кĕтеттĕмĕр. «Кукамай, юмах яр-ха, ухмах Йăван çĕр сум укçипе мĕн-мĕн туянни çинчен каласа пар-ха», – тесе кун каçипе миçе хутчен йăлăнман-ши?! «Ачамсем, кăнтăрла юмах юптармаççĕ. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур. Каçчен кĕтĕр ĕнтĕ», – тетчĕ хаклă çыннăмăр ăшпиллĕн.

Тавралăха хура чатăр карсан, тӳпе йăлтăркка çăлтăрĕсене çутсан, пӳрт чӳречисем вĕсене саламласа сывлăх суннăн куçĕсене хĕсме пуçласан кукамайăн юмах çăмхи те сӳтĕлме тытăнатчĕ. Шăллăмпа иксĕмĕр шыв сыпнă пек шăп ларattăмăр. Куç умĕнче тĕлĕнтермĕшсен асамлă тĕнчи чĕрĕлсе тăратчĕ...

Ачалăхăмри ырă самантсене аса илнĕ май Кĕлпук мучи çинче чарăнса тăрас килет. Вăл Ухсай Яккăвĕн «Кĕлпук мучи» поэминчи сăнар пулнине чылай кайран, тăван литературăпа туслашсан тин, пĕлнĕччĕ. Çапла, халăх юратакан, хапăлласа йышăнакан сăнарпа паллашасси хайлав вуланинчен мар, мучи сассине тăнланинчен пуçланнă. Чăвашрадио эфира кăларакан юмахсене çемйипех итлеме кăмăллатăмăр. Хайхи Кĕлпук мучи пушшех тыткăнлатчĕ. Тĕлĕнмелле ăста юмахçăччĕ вăл. Култарма та, шанăç кӳме те, кирлĕ чухне куççуль кăларттарма та пĕлетчĕ. Сăнарсемпе пĕрле савăнаттăмăр, хурланаттăмăр. Юлашкинчен вĕсем тăвансем пекех туйăнма пуçлатчĕç.

Темшĕн çитĕннĕçем этем юмахсенчен писет. Алăра – расна кĕнекесем, радиопа та урăхларах кăларăмсем кăсăклантараççĕ. Çапах тепĕр чухне пурнăç иртнĕлĕхе çаврăнса пăхма хистет пире, ачалăхра манса хăварнă савăк кăмăлпа юмахсене хамăрпа пĕрле илме май парать. Çав саманта асăрхамасăр хăварас марччĕ çеç.

## Телей алăкĕ уçăлсан...

Тантăшăмăрсем, пирĕн умра халĕ телейĕн пысăк алăкĕ яриех уçăлчĕ – Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа «Кĕлпук мучи юптарать» кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Ăна пухса хатĕрлекенĕ – Чăвашрадио корреспонденчĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ литература премийĕн лауреачĕ Галина Вастрюкова; редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Елена Енькка. Кăларăма РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Ефим Никитин Чăвашрадиопа каласа панă юмахсенчен хатĕрленĕ. Чăваш халăх юмахĕсемсĕр пуçне уйрăм çыравçă тата тĕрлĕ халăх халапĕсене те тĕл пулăр кунта. Çавăнпа вĕсене танлаштарса пăхма та пулать. Сăмахлăх урлă халăх шухăшлавĕ, йăли-йĕрки пит аван курăнать.

Юмахсене вуласа киленме çеç мар, итлесе савăнма та май пур. Кĕнекепе пĕрле «Чăваш Ен» патшалăх телевиденипе радиовещани компанийĕн фондĕнче упранакан юмахсене çырса илнĕ диска хурса панă. Эппин, каççерен çемйипе пуçтарăнса Кĕлпук мучи юптарнине итлеме сĕнетĕп пурне те. Аслăраххисем иртнине аса илĕç, кĕçĕннисем вара ăста юмахçăпа паллашĕç. Сăмах май, Ефим Никитич çинчен «Эпĕ-ха ку, Кĕлпук мучи...» ум сăмахра тĕплĕнрех çырса панă Галина Витальевна.

Ефим Никитин 1912 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Арапуçĕнче çуралнă. Ачаранах артист пулма ĕмĕтленнĕ вăл, шкулти сценкăсемпе спектакльсенче вылянă. Анчах ăнăçăва çеç шанса ларман Ефим – вăйне шеллемесĕр тар тăкнă, ялан малалла ăнтăлнă. Ку енĕпе вăл паянхи ăрушăн та ырă тĕслĕх пулма тивĕç. Палăртнă çултан пăрăнмасассăн телей патне çитетĕнех.

Акă мĕн вуласа пĕлетпĕр ум сăмахра: «Литература вĕрентекен Сергей Ялавин кружок йĕркелени, арçын ача унта хастар хутшăнни, аслисем эсĕ театр валли çуралнă тесе хавхалантарни артист пулас шухăша татах çирĕплетнĕ. Çавăнпа та вăл Мишша юлташĕпе пĕрле Ленинградри артистсене хатĕрлекен шкула вĕренме кĕме çыру ярать. Хăй ячĕпе килнĕ йыхрав хутне илеймен пулсан та /ашшĕпе амăшĕ унăн шухăшне ырламан, артист пулма пиллемен, йыхравне те кăтартман/, чугун çул çинче ĕçлеме каякансемпе пĕрле çула тухать. Ленинградра пилĕк кун ĕçлесе билет хакне кăларсан юлташĕпе пĕрле артистсен шкулне кайса курать, экзаменсене ăнăçлă тытнă, этюдсене кăтартнă хыççăн вĕренме тытăнать». Интереслĕ фактсем татах та пур кунта. Вĕсемпе вулакан хăй паллашасса шанатăп.

## Кĕрешӳре чăнлăх çуралать

Содержанийĕпе те, калăпăшĕпе те, сăнарсен системипе те расна юмахсене мĕн пĕрлештерсе тăратьха? Паллах, ырăпа усал, тĕрĕслĕхпе ултав, тӳрĕлĕхпе чеелĕх, ăспа айванлăх хирĕçтăрăвĕ. Çак кĕрешӳре чăнлăх çуралать. Вулакан пĕртен-пĕр тĕрĕс шухăш патне пырса тухать.

Юмахсенче асамлă ĕçсене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Вĕсемсĕр май та çук пек. Анчах виçине пĕлмесессĕн, ытлашши аташса кайсассăн асамлăх та сиен кӳме пултарать-мĕн. Çакăн çинчен систерет те «Вун икĕ çула кĕрĕшнĕ тарçă». «Нюх-Нюх сăмси мĕншĕн пуклак?» ятли тӳрремĕнех евитлет. «Кирлĕ мар çĕре сăмсана чикме хушмаççĕ çав», – тет. Тилĕ ялан чее: карчăкпа старике те /«Тилĕ тус»/, кашкăра та /«Тилĕпе кашкăр»/, упана та /«Тилĕпе упа»/ шăн пăр çине лартса хăварать. «Чăхă çинчен» юмах сас-хура еплерех сарăлнине уççăнах кăтартса парать. Сăмах тухсан пĕр пĕчĕк чĕп те пилĕк чăхха çитет, шăнаран та слон пулать. «Тантăш» тусĕсем, чи пысăк пуянлăх мĕн пулнине пĕлетĕр-и эсир? Çук тăк «Чи пысăк пуянлăх» хайлава вулăр.

«Кĕлпук мучи юптарать» кĕнекепе тата аудиодискпа эсир вăхăта усăллă та хаваслă ирттерме пултарăр. Кашни юмах хăйне евĕрлĕ, интереслĕ. Вĕсем сире савăк самантсем парнелессе шансах тăратăп.

ЫТАРЛĂН

# Çĕр улмипе кӳренӳ



Вĕренекен вĕрентекен патне пынă.

– Эсĕ ăс-хакăллă, ялан хавас кăмăллă, нихăçан та тарăхмастăн. Пулăшсамччĕ мана та çапла пулма, – ыйтнă çамрăк аслинчен.

Вĕрентекен килĕшнĕ, вĕренекене çут хутаçпа çĕр улми илсе пыма каланă.

– Эсĕ кама та пулин çилленсессĕн е кӳренсессĕн хайхи çĕр улмие ил. Унăн пĕр енче хăвăн ятна çыр, тепĕр енче – тавлашăва кĕнĕ çыннăнне. Вара çĕр улмие хутаçа яр, – тенĕ вĕрентекен.

– Çакă çеç-и? – аптăравлăн ыйтнă вĕренекен.

– Çук, – хуравланă учитель. – Санăн çав хутаçа ялан пĕрле йăтса çӳремелле. Тата кама та пулин кӳренсессĕн тепĕр çĕр улми хушмалла.

Вĕренекен килĕшнĕ.

Тем вăхăт иртнĕ. Çамрăк çын хутаçне тата темиçе çĕр улми хушăннă, çĕклем самай йывăрланнă. Ăна пĕрмай пĕрле илсе çӳреме кансĕртерех пулнă. Çитменнине, маларах хунă çĕр улми çĕрме пуçланă. Вăл йĕрĕнчĕк йăлмакапа витĕннĕ. Теприсем е шăткаланă, е симĕсленнĕ. Хутаçран усал шăршă вăйлах кĕнĕ. Вĕренекен учитель патне пынă.

– Куна тек хампа пĕрле йăтса çӳреме çук. Пĕрремĕшĕнчен, хутаç ытла та йывăр, иккĕмĕшĕнчен, çĕр улми çĕрет. Мĕн те пулин урăххи сĕнсемччĕ, – тенĕ.

Вĕрентекен çапла хуравланă:

– Санăн чунра та шăпах çакăн евĕрлĕ пулăм хуçаланать. Эсĕ кама та пулин кӳреннĕ, тарăхнă чухне чунна йывăр чул пусарать. Тӳрех асăрхамастăн çеç ăна. Кайран чулсем тата йышланаççĕ. Уйрăм хăтланусем йăлана кĕреççĕ, йăласем вара характера йĕркелеççĕ, вăл хайхи усал шăршăллă çитменлĕхсене çуратать те. Ку çĕклем çинчен манма питĕ ансат, ара, ялан пĕрле йăтса çӳреме вăл ытла та йывăр-çке-ха. Эпĕ сана çакна йăлт айккинчен сăнама май патăм. Ӳлĕмрен кашнинчех, кама та пулин кӳренес умĕн е кӳрентериччен, шухăшласа пăх: кирлех-и сана çав чул.

***Вырăсларан Ольга ИВАНОВА куçарнă.***

*Николай ГАРИН-МИХАЙЛОВСКИЙ*

# Тёма тата Жучка




Каç. Тема питĕ канăçсăр çывăрать…

Каçхи лампăн вăйсăр çути тăватă пĕчĕк кравате тата пиллĕкмĕшне, пысăккине, кăшт çутатать. Унта халĕ каçхи кĕпе тăхăннă, вăрăм çивĕтне ирĕке янă, ыйхăллă няня пĕчĕк Аньăна майĕпен силлесе çывăртать.

– Няня, Жучка ăçта? – ыйтать Тема.

– И-и, – хуравлать няня. – Ăна пĕр чун илли кивĕ пусса ывăтнă. – Кăшт тăхтасан хушса хурать: – Чĕрĕллех чăмтарнă вĕт… Мăнтарăн кунĕпе нăйкăшнă тет…

Тема куçĕ умне тӳрех сад кĕтессинчи юрăхсăра тухнă, çӳп-çаплă, вараланчăк кивĕ пусă, унăн шуçлак тĕпĕ тухса тăчĕ. Иоськăпа иккĕшĕ хăш чухне унта шăрпăкпа тивертнĕ хут таткисене пăрахса тĕттĕмлĕхе çутатма юрататчĕç.

– Кам ывăтнă? – ыйтать Тема.

– Пĕлместĕп.

Арçын ача сехĕрленсе тимлерĕ няня сăмахĕсене. Тем чухлĕ шухăш явăнать унăн пуçĕнче, Жучкăна çăлас тĕлĕшпе те пуçа çĕмĕрет. Темĕн тĕрлĕ шухăш çавăрттарнă хыççăн хăй те сисмесĕр ыйха путать. Хăйне такам тĕкнĕн каллех вăранса каять. Унăн тĕлĕкĕ шăпах Жучкăна пусăран темĕнле йăлмакпа туртса кăларнă самантра татăлать. Йытă пĕрмай тапаçланнăран кăлараймарĕ, хăех тĕттĕм пусса анма шут тытрĕ. Тема лайăх астăвать: вăл вĕрене темĕнле юпаран çыхрĕ те асăрханса пура пĕренисем çине пуса-пуса аялалла анма пуçларĕ. Çур çула çитсен сасартăк унăн урисем шуса кайрĕç те вăл шăршлă пусă тĕпне чăмрĕ. Çав вăхăтра Тема вăранса кайрĕ, хăрушă саманта аса илсе каллех чĕтренсе-çӳçенсе илчĕ.

Тĕлĕкĕ тĕлĕнмелле уçăмлăн палăрать умĕнче. Чӳрече хуписенчен шурăмпуç çуталса килни курăна пуçларĕ.

Тема ӳт-пĕвĕ темĕнле ыратса, çемçелсе кайнине туйрĕ пулсан та хăйне алла илсе вырăн çинчен тăчĕ. Тĕлĕкĕн пуçламăш пайне пурнăçлама шут тытрĕ, васкаса тумланма пикенчĕ…

Унтан няня кравачĕ патне пырса урайĕнче выртакан пĕчĕк курупкаран пĕр ывăç шăрпăк илсе кĕсйине чикрĕ. Чĕрне вĕççĕн утса столовăйне тухрĕ. Кантăк алăк витĕр аванах çутă кĕрет.

Столовăйĕнче яланхи пекех ирхи йĕркесĕрлĕх хуçаланать: сĕтел çинче сивĕннĕ сăмавар, вараланнă чашăксем лараççĕ, çăкăр татăкĕсем выртаççĕ, куç умне çуллă шаркку юлашки лекет.

Тема хаçат купи выртакан уйрăм сĕтел çинчен асăрханса темиçе номер кăларса илчĕ те чĕрне вĕççĕн утса кантăк алăкăн çăрине сасă кăларас мар тесе шăппăн пăрчĕ, хăлăпне çемçен пусса террасăна тухрĕ.

Ăна усă, ирхи нӳрĕк сывлăш «çупăрларĕ».

Кун пуçланать кăна-ха. Тĕссĕр кăвак тӳпере унта-кунта кăпăш, «çăмламас» пĕлĕт татăкĕсем çакăнса тăраççĕ. Сад çийĕн тĕтре караннă. Террасăра пушă, сак çинче амăшĕн манăçса юлнă тутăрĕ çеç тăлăххăн выртать…

Вăл картлашка тăрăх утса сад пахчине анчĕ. Унта та столовăйĕнчи пекех ĕнерхи кун тасамарлăхĕ хуçаланать. Ĕнерхи çапса çунă çумăрпа çаврăнса пĕтĕрĕннĕ çулçăллă чечексем пуçĕсене аялалла уснă. Сарă тĕслĕ йĕпе сукмак çинчи шыв юхăмĕсем те вăйлă çумăра аса илтереççĕ. Çил лăсканипе çулçисем таврăннă йывăççем аялалла авăннă та ирхи тутлă ыйха путнă пекех курăнаççĕ.

Тема тĕп аллейăпа утрĕ, унăн каретника кĕрсе йăлăм валли тилхепесем илмелле. Вĕрлĕксене вара беседка картинчен хăйпатĕ…

Каретника çăрапа питĕрнĕччĕ. Анчах Тема тепĕр çул пĕлет: вăл пĕшкĕнсе йытăсем алтнă шăтăкран сарайне кĕчĕ. Икĕ тилхепепе кĕпе-йĕм çакса типĕтмелли вăрăм вĕрене /тен, кирлĕ пулĕ/ илчĕ.

Стена çинче çакăнса тăракан хунара асăрхасан ăна та пĕрле илме шут тытрĕ, унпа тĕттĕм пусса çутатма меллĕрех пулĕ. Шăрпăкпа чĕртнĕ хаçатсене аялалла пăрахнă чухне Жучкăна та лексе сиен кӳме пултарать-çке.

Сарайĕнчен тухсан Тема беседкăна кĕске çулпа çитесшĕн пулчĕ – картишĕпе сада уйăрса тăракан стена урлă каçас терĕ. Хунара шăлĕпе çыртрĕ, тилхепесене мăйĕнчен уртса ячĕ, вĕрене хăй тавра çавăрса çыхрĕ те стена çине хăпарма пуçларĕ. Унта-кунта кармашма вăл маçтăрччĕ-ха, паян вара пуçне икĕ енчен те мăлатукпа шаккаççĕ тейĕн, ыратнипе чутах ӳкмерĕ.

Çӳле хăпарса çитсен пĕр самант хашка-хашка ларчĕ, урисене усрĕ те сикме меллĕ вырăн шыраса аялалла тинкерчĕ. Çĕр çинче исĕм тĕммисем çеç, çумăрпа йĕпеннĕ çулçă хушшине сиксен самантрах йĕп-йĕпе пуласса халĕ тин ыхăна шухăшласа илчĕ Тема. Каялла çаврăнас терĕ, анчах вăхăта сая яма юрамасть, сикмеллех. Йывăç ӳсмен лаптăк çинех сикрĕ вăл. Анчах пурпĕрех йĕпенме тиврĕ – малалла исĕм тĕммисен хушшипе утса сукмак çине тухрĕ. Сивĕ шыв Темăна самантрах усăлтарчĕ, вăл хăйне вăй кĕнине туйса илсе беседка патне чупрĕ, хăпăл-хапăл тăвалла хăпарчĕ те темиçе вăрăм патак туртса кăларса пысăк утăмсемпе сăрт çинчен анчĕ…

Вăрăм курăк хушшинче тăлăххăн ларакан кивĕ пусă умне чупса çитсен Тема çурма сасăпа:

– Жучка, Жучка! – тесе йыхăрчĕ.

Хурав илтесшĕн пулса пĕр хушă хытса тăчĕ.

Малтан вăл хăйĕн чĕри таппипе пуçне ыраттаракан «мăлатук çапăмĕсене» çеç илтрĕ. Тепĕр самантран таçтан инçетрен, аялтан, мĕскĕннĕн, вăрăммăн йынăшни илтĕнчĕ. Темăн чĕри асаплăн пăчăртанчĕ, вăл тепĕр хут хыттăн кăшкăрчĕ:

– Жучка, Жучка!

Ку хутĕнче йытă хуçин сассине палланине палăртса савăнăçлăн та мĕскĕннĕн нăйкăшрĕ.

Çакă Темăн чунне пырса тиврĕ, куççулĕ те тухрĕ.

– Хаклă Жучка! Чăт кăштах, часах пулăшăп сана! – йытă хăйне ăнланас пек кăшкăрчĕ Тема.

Жучка каллех савăнăçлăн нăйкăшса илчĕ. Инкеке лекнĕскер Темăна васкама ыйтнă пекех туйăнчĕ.

– Часах, Жучка, часах, – хуравларĕ те Тема Жучка умĕнчи яваплăха туйса хăйĕн тĕлĕкне пурнăçа кĕртме пуçларĕ.

Чи малтан вăл ĕç-хĕлĕн майне пĕлесшĕн пулчĕ. Хăйне яланхи пекех хăпартлануллăн туйрĕ çак вăхăтра.

Пуçĕ те ыратма чарăнчĕ. Хунара ункăран вĕренпе çыхса çутса пусса антарасси пĕр минут кăна йышăнчĕ.

Тема пĕшкĕнсе тĕттĕмлĕхе тимлерĕ.

Хунар çути хура тĕс çапнă пусă пурин пĕренисене вăйсăррăн çутатрĕ, майĕпен аялалла анса пычĕ, виçĕ хăлаç пек таранăшра тинех тĕпĕ курăнчĕ.

Тĕпсĕр пек туйăнакан тĕттĕм шăтăкра хускалмасăр выртакан, тĕкĕр евĕр витĕр курăнакан, ырă мар шăршă саракан, пур енчен шуçлак та çĕрсе исленме пуçланă пура пĕренисемпе хупăрланнă шыв инçетре хăрушăн та сиввĕн йăлтăртатрĕ.

Çак инçе тĕпсĕрлĕхрен Темăна вилĕм хăрушлăхĕн шăрши кĕнĕ пекех туйăнчĕ. Вăл Жучкăшăн шикленсе ӳкрĕ. Сывламасăр тенĕ пек Тема пĕр кĕтесре хускалакан хура пăнча асăрхарĕ, вăйсăр кĕлеткере аран-аран палласа илчĕ хăйĕн тахçан хаваслă та çаврăнăçуллă, халĕ пура пĕр пĕрени çинче тытăнса тăракан йыттине. Вăхăта сая ямалла мар. Жучка ăна кĕтсе илеймесрен хăранипе Темăна çĕнĕрен вăй кĕчĕ тейĕн. Вăл хунара васкаса туртса илчĕ. Жучка хăйне каллех пăрахса хăварчĕç тесе ан шутлатăр тесе пусса анма хатĕрленнĕ май Тема пĕрмай кăшкăрчĕ:

– Жучка, Жучка, эп кунтах!

Йытă ăна савăнăçлă нăйкăшăвĕпе хуравланишĕн тем пекех хĕпĕртерĕ. Тинех йăлтах хатĕр. Тилхепесемпе усă курса хунарпа икĕ вĕрлĕке, вĕçне урлă вырнаçтарнă патака, ун çине çирĕплетнĕ йăлмака майĕпен пусса антарма пуçларĕ.

Анчах та шухăшласа хуни Жучкăн хăвăртлăхне пула пурнăçланаймарĕ.

Ăсталанă хатĕр ун патне çитсенех вăл йăлмакран малти урисемпе çакланасшăн пулчĕ. Йăлмака тытаймарĕ, хăй вара тĕрекне çухатса вараланчăк шыва кĕрсе ӳкрĕ.

Мĕскĕн хыттăн нăйкăшса шывра чăмпăлтатрĕ, паçăр хăй тăнă пĕренене шырарĕ.

Жучкăна çăлма май пулни, ăна инкекрен хăтарма мехел çитерейменни, юратнă йытти вилме пултарни… Çак шухăшсем Темăна тĕлĕкĕн иккĕмĕш пайне те пурнăçлама – хăйне пусса анма – хистеççĕ. Юрать мĕн тумаллине палăртса хунă вăл.

Арçын ача тилхепесене урлă хывнă каштана тытса тăракан пĕр юпаран çыхать те пусса анма пуçлать. Вăл ăнланать: кашни çеккунт хаклă.

Сăмсине тӳрех усал шăршă çапать. Пĕр самантлăха чунĕнче шикленӳ çуралать: чыхăнса вилес марччĕ çеç. Жучка унта пĕр талăк ларнине аса илет те лăпланать, малалла анать. Асăрханса хăрах урипе пĕренене пуса-пуса тĕрĕслет, вара иккĕленмесĕр çирĕппĕн тепĕр урине вырнаçтарать.

Пăрахса хăварнă вĕрлĕкпе хунар тĕлне çитсен вăл хунара çирĕпрех çыхать, тилхепен пĕр вĕçне вĕçертет те малалла анать. Ырă мар шăршă вăйлăрах палăрни каллех пăшăрхантарать ăна, шиклентерет. Тема çăварĕпе сывлама тытăнать. Питĕ лайăх: шăршă туйăнмасть, шикленӳ те сирĕлет.

Аялта – ырă хыпар! Жучка малтанхи вырăнне тупнă та лăпланнă, халĕ çак çăлав ĕçне пурнăçлаканăн хутне кĕнĕн хаваслăн нăйкăша-нăйкăша илет.

**(Малалли пулать).**

***Вырăсларан***
***Нина ЦАРЫГИНА***
***куçарнă.***



## Ташлакан пыл хурчĕсем

Пыл хурчĕсем апат тупнине тăванĕсене мĕнле пĕлтерессĕ-ши? Питĕ хăйне май – вĕсем ташлаççĕ. 1943 çулта Австри этологĕ /чĕрчунсен тыткаларăшне тĕпчекен ăсчах/ Карл Риттер фон Фриш пыл хурчĕсен ташши çинчен калакан ĕçне пичетлесе кăларнă. Нумай çул тĕпченĕ хыççăн вăл çапларах пĕтĕмлетӳ тунă: пыл хурчĕн ташши ыттисем патне ятарлă информаци çитерет. Ташă характерне, çул-йĕрне тата вăрăмăшне кура апат çăлкуçĕ ăçта вырнаçнине кăтартса парать вăл.

1973 çулта фон Фриш /Конрад Лоренцпа тата Николас Тинбергенпа пĕрле/ чĕрчунсем хăйсене пĕчченшер тата ушкăнпа мĕнле тытнин моделне туса çирĕплетнĕшĕн Нобель премине тивĕçнĕ.

## Рак хăçан шаклатать?



Тăшманпа кĕрешмелли чи тĕлĕнтермĕш меслетсенчен пĕрне шаклатакан рак шухăшласа тупнă. Хăйне чăрмав кӳрекене вăл шартлатнă сасă кăларса вĕлерет. Шаклатакан рак хăй питĕ пĕчĕкскер, унăн тăршшĕ тăвата сантиметр çеç. Хăйĕн хаччипе вăл хăлха хупланса лармалла сасă кăларать, çакă петарда çурăлнă пек илтĕнет. Сăлтавĕ вара – хачă хăйне евĕрлĕхĕнче, унăн варри пушă пулнăран сасă тата вăйланать.

Тăшмана хăлхасăрлатас меслетпе раксем хӳтĕленӳ тĕллевĕпе усă курăççĕ. Шаклатакан раксем ушкăнăн-ушкăнăн пурăнма юратнине шута илсен вара вĕсен çывăхĕнче ишсе çӳрекен вĕтĕ пулăсене хĕрхенмелли çеç юлать: хăватлă ультрасасă хумĕпе вилме те пулать-çке.

## «Тăпăр-тăпăр» калаçу



Слонсем пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăннине пĕлетĕр-и? Хăш-пĕр ăсчах шухăшĕпе, вĕсем çĕр чĕтретсе «калаçаççĕ» иккен. Ултă тонна таякан улăпсем вырăнта тăпăртатса тăнă май ытти слонсене ятарлă паллăсем ярса параççĕ. Çак сасса вĕсем вăтăр икĕ çухрăмран та туяççĕ: хăлхапа мар, урапа.

Çапла пĕррехинче слон кĕтĕвĕ чипер утнă çĕртех ăнсăртран тепĕр еннелле пăрăннă та чупсах кайнă. Ăсчахсем палăртнă тăрăх, çав вăхăтра вĕсенчен темиçе çухрăмра браконьерсем слонсен тепĕр кĕтĕвне тапăннă иккен. Инкеке лекнĕ чĕрчунсем тăванĕсене тăпăртаттарса асăрхаттарнă имĕш.

## Шыв курăкĕн усси пысăк



Çĕр çинчи атмосфера кислорочĕн ытларах пайне шыв курăкĕсем кăлараççĕ. Çавăнпа вĕсем этемĕн пуласлăхĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тепĕр тесен, шыв курăкĕ пахалăхсăр çĕр çинче те ӳстерме пулать, тăварлăрах шывпа шăварса тăмалла çеç. Ку ял хуçалăх культури çĕре сиенлеместь, удобрени ыйтмасть, сывлăша çĕр çинчи мĕнпур ӳсен-тăранран та ытларах пуянлатать.

## Пĕр канмасăр инçе вĕçекенсем



Пĕр канмасăрах вĕçессипе кайăксем пĕри тепринчен ытларах тĕлĕнтерессĕ. Хальхи ăслăлăха ĕненес пулсан, çапла майпа чи вăрăм инçĕше вĕçекен кайăксем – пĕчĕк йĕкеçĕсем /малые веретенники/. Вĕсен рекорчĕ – 11 пин те 425 километр. Ăсчахсем çак кайăксене тахçанах сăнама пуçланă. 1976 çултах Роберт Гилл-кĕçĕнни биолог пĕчĕк йĕкеçĕсене /шурлăх чарланĕн уйрăм тĕсĕ/ пысăк тимлĕх уйăрнă. Вăл çак кайăксем вĕçекен хăмпăсене аса илтерекен пуличченех пĕр чарăнми апат çăтнине асăрханă. Ун чухне çунатлăскерсен çулĕ инçе пуласса тĕшмĕртнĕ-ха. Анчах çак çулçӳрев мĕн чухлĕ тăсăласса никам та пĕлме пултарайман.

## Вилĕмсĕр медуза



Çутçанталăкра вилĕмсĕр чĕрĕ чун пур – вăл Turritopsis Nutricula медуза. Пĕчĕкскер çеç хăй, тăвата е пилĕк миллиметр тăршшĕ. Тулаш енчен пăхсан нимĕнпе те палăрмасть пек. Анчах çутçанталăк ăна савăнтарнă – вăл хăй тĕллĕн çамрăкланма пултарать. Çак чĕрчунсене Вăтаçĕр тинĕсĕнче 1883 çултах асăрханă, анчах ĕмĕрлĕх çамрăклăх паллине 1990 çулта çеç тупнă.

Аслă ӳсĕмри медуза çĕмĕллĕнах полип вăхăтне таврăнаять. Çапла темиçе хутчен. Çакă ăна вилĕмсĕр пулма пулăшать. Медуза организмне тĕпчесе çитерсен, тен, ăсчахсем рак чирĕпе тата ватлăхпа кĕрешмелли ăнаçлă меслет шухăшласа тупĕç.

## Кăткăсем «сирпĕнеççĕ»



Хăш-пĕр кăткă хăйĕн колонине хӳтĕлес тĕллевпе «сирпĕнме» пултарать. Йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳксен вăл ятарлă ăш-чикне /ытларах чухне хырăмне/ касса çурать те унта пуçтарăннă секретне /ӳт парĕсем туса кăларакан япала/ сирпĕтме тытăнать. Çапла майпа тапăнакансене чарать, хăй вара вилсе выртать.

## Çанталăка мĕнле пĕлмелле?



Тĕнчери халăхсем çуркунне çитнине пĕр-пĕр чĕрчуна сăнанă май ăнланнă. Анчах «Сăвăр кунĕ» фильм хыççăн Фил сăвăр чи паллă метеоролог пулса тăрать. Çапах та ку уявăн тымарĕсем авалтанах килнине палăртмалла. Авалхи Римра нарăс уйăхĕн иккĕмĕшĕнче Чĕрĕп кунне паллă тунă. Унта çанталăка чĕрĕп хăйне мĕнле тыткаланине кура палăртнă – чĕрчун мĕлкине курать-и, курмасть-и? Европа халăхĕсем çак йăла-йĕркене сыхласа хăварнă, вĕсен тĕп метеорологĕсем – пурăш тата упа. Çурçĕр Америкăра вара çанталăк мĕнле пулассине пĕлме сăвăрсене сăнаççĕ.

## Висĕ куç хупанкипе мĕн тумалла?



Тĕвесен хăйартан сыхланмалли меслечĕсем сайра йышши. Çавăнпа вĕсем пушхирте чылай вăхăт çӳреççĕ, пит-куçа хăйăр вĕçтересрен те хăрамаççĕ. Вĕсен куç хупанки çинче хăрпăксем икĕ ретпе вырнаçнă. Сăмса шăтăкĕ те пĕтĕмпех хупланаять. Чи тĕлĕнмелли вара – çак чĕрчунсем висĕ куç хупанкиллĕ пулни. Иккĕшĕ этемĕнни пекех: çӳлелле-аялалла хускалаççĕ, куçа усаççĕ те хупаççĕ, çапла майпа ăна нӳретеççĕ, тасатаççĕ, çутăран, тусанран, шывран тата ытти чăрмавран хӳтĕлеççĕ.

ХАВАСЛĂ САМАНТ 2016

# Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 1. Икĕ вĕçлĕ япала. 5. Утă-улăм купи. 9. Çын ячĕ. 13. Вĕрекен шыв çиййĕ. 17. Чашăк-... 20. Тапăну. 21. Ялти будильник. 22. Банан йывăçĕ. 23. Ăна лаша сĕтĕрет. 24. Финн халăхĕн кӳрши. 25. Манăçми аваллăх. 26. «Илиада» авторĕ. 27. Авалхи Киев Руçĕн «пуçлăхĕ». 28. Çăвара çыпăçакан çимĕç. 29. Йог йышăнакан меслет. 30. Стравинский опери. 31. Одиссей тăрăхĕ. 32. Вăл пит çине тухать. 33. Хальхи вăхăтри фотоаппарат ячĕ. 34. Чĕнсе илекен авто. 35. Механизм пайĕ. 36. Тĕрлĕ тĕн ушкăнĕ. 37. Вырăс «бейсболĕ».

**Аялалла:** 1. Пуçлăх тенкелĕ. 2. Авалхи халăх. 3. Тинĕсри чĕрчун. 4. Уçланкăри ... /юрăран/. 5. Хаклă йышши чулсен виçи. 6. Лакăм вырăн. 7. Модель – ... Кэмпбелл. 8. Картăсен пуххи. 9. Самолетсен гаражĕ. 10. Çын сипетлĕхĕ. 11. Вĕçекен «хăмпă». 12. Упăте апачĕ. 13. «Пыл» телефонĕ. 14. Ăна шакла пуçлă çын тăхăнать. 15. Турасăр çӳрекен çын. 16. Çĕлен-... 17. Наян. 18. Болт, гайка, ... 19. Карлăн кларнетне вăрлакан.



**Сылтăмалла:** 7. Ăна тахçан пионер пăнтăртаттарса çӳренĕ. 8. Республикăн тĕп хули. 9. Вăл хапха тăрринче. 11. Лашан çуллахи тăшманĕ. 12. Ӳнерçĕн ĕçĕ. 15. Çутçанталăк ӳпки. 16. Африкăри çĕршыв. 17. Чурасен хуçи. 20. Тайăлса кайнă шрифт. 21. Тинĕс офицерĕн çĕççи. 25. Каялла мар. 27. Тĕш тырă упрамалли вырăн. 28. Ун çинче караççем ăшаланаççĕ. 29. Наука ăсчахĕсен аксакалĕ. 30. Авалхи çăнăх-кĕрпе виçи.

**Аялалла:** 1. Çĕмĕрле районĕнчи ял. 2. Утă çулмалли вырăн. 3. Тахçан вăл пысăк çар званийĕ пулнă. 4. Тĕрлемелли тĕслĕ çип. 5. Лачакаллă вырăн. 6. Гипербола мар. 10. Пушкăртстанри хула. 13. Кишĕрти витамин. 14. Чăваш боксерĕ, Олимп чемпионĕ. 18. Çурăм хыçĕнчи хутаç. 19. Физика терминĕ. 22. Раççейри авалхи çар çынни. 23. Республикăри хула. 24. Инди халăхне чапа кăларнă çын. 26. Кăнтăрти тутлă çимĕç.

## Капăр елка айĕнче пит илемлĕ-çке тĕнче



1. Маскарад тăванĕ. 2. Хăна çуртĕнчи чи лайăх вырăн. 3. Ăшă мар. 4. Яланлăхли. 5. Чăвашсен хăвăрт утакан спортсменки. 6. Унта кайăк-кĕшĕксем хĕлле çĕр каçаççĕ. 7. Хĕл кунĕсенче вăл шутсăр вăрăм. 8. Чăвашсен кӳрши. 9. Шартлама сивĕре мăрьерен тухакан япала. 10. Африка ăшшинчи çĕршыв. 11. Раççейĕн тахçанхи укçи. 12. Мунча кӳрши. 13. Тирпейлĕ ĕçлени. 14. Çырмалли хатĕр. 15. Чăрăшсене касса пĕтернĕ вырăн. 16. Услап. 17. Ăна пăсма юрамасть. 18. Тухтăр. 19. Казахстанри хула. 20. «Модерн Токинг» ушкăн юрăçи. 21. Кичем. 22. Лаша. 23. Вăл хĕлле те ăшăтать. 24. Чăваш çыравçи – Петĕр ... 25. Уншăнах Йĕпреçе каймаççĕ. 26. Платникĕн вăл яланах катăк. 27. Кĕвĕçӳлĕх. 28. Пирĕн ... анаталла /юрăран/. 29. Капашсăр виçе. 30. Пӳрт ăшшине тытакан.

**Асăрхаттарни:** Хуравсене тĕрĕс тупсассăн, палăртнă ункăсенче Хĕл мучине сивĕре мĕн пулăшнине пĕлме пулать.

## Çула тухнă Хĕл Мучи, елкăна çитейĕ-ши?





**Сылтăмалла:** 5. Çурăм хыçĕнчи хутаç. 6. Кирпĕч купалакансен «старшини». 8. Ун чăххи сар çăмарта тунă тет. 11. Самолетсен гаражĕ. 14. Хăшĕ-пĕрин вăл хупăнма пĕлмест. 15. Хваттере янă хурт-кăпшанкă. 16. Генерал пулма ĕмĕтленекен. 17. Вут пуленкисен купи. 21. Лара-тăма пĕлмен çын. 22. Ăна наян чи малтан ярса тытать. 23. Ăш хыптармăш. 26. Чăваш апачĕ. 27. Молдавансен кĕвĕ инструменчĕ. 28. Джейран, сайгак, ...

**Аялалла:** 1. Çыпçăнма килĕштерекен ӳсен-тăран. 2. Пирĕн тăрăхри чул. 3. Кайăксене хĕрхенсе тăрантаракан йывăç. 4. Чăваш кăйкăрĕ – космонавт. 7. Шутсăр шултра мулкач. 9. Мухтанчăк. 10. Р.Сарпи сăвăçăн хайлавĕ. 12. Пушă. 13. Кăнтăрти йывăç. 18. Шаблон, клише, ... 20. Вăл Одиссее чăтăмсăррăн кĕтсе пурăннă. 24. Хусанти футбол команди. 25. Йĕп пайĕ.

*Николай КРАСНОВ* (Йĕпреç районĕ) *хатĕрленĕ.*